27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 ФЕВРАЛЬ 18 ВЫРСАРНИКУН 32(6783) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Белоруссири 3-мĕш фронт çарĕсен командующине
Арми генералне ***ЧЕРНЯХОВСКИЕ***
Фронт штабĕн начальникне
Генерал-полковника ***ПОКРОВСКИЕ***

БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем, тăшманăн Хĕвелтухăç Пруссири группировкине хупăрласа илнĕ унка хĕссе пырса, ВОРМДИТТ тата МЕЛЬЗАК хулисене—çулйĕрсен паха узелĕсене тата нимĕçсен оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕсено—штурмласа туртса илнĕ.

ВОРМДИТТ хулипе МЕЛЬЗАК хулине туртса илесшĕн çапăçнă чухне çаксем чапа тухнă: ГОРБАТОВ генерал-полковникăн, ОЗЕРОВ генерал-лейтенантăн, ИВАШЕЧКИН генерал-лейтенантăн, ГАРНИЧ генерал-майорăн, УРБАНОВИЧ генерал-лейтенантăн, НИКИТИН генерал-майорăн, ЗАХАРОВ генерал-лейтенантăн, ИВАНОВ генерал-лейтенантăн, ТЕЛКОВ полковникăн, КОНОВАЛОВ генерал-майорăн, АБИЛОВ полковникăн, ГРЕКОВ полковникăн, МИХАЛИЦИН генерал-майорăн, КРИВЕНЦОВ полковникăн, ВЯЗНИКОВЦЕВ полковникăн, СОБОЛЕВ полковникăн, ПЕРЕВОЗНИКОВ полковникăн, КРОНИК генерал-майорăн, ДАЛМАТОВ генерал-майорăн, МАЛЮКОВ генерал-майорăн, ХВОСТОВ генерал-майорăн, ЦВЕТКОВ полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-майорĕн БАРСУКОВАН, артиллери генерал-майорĕн ВАСИЛЬЕВАН, АЙРАПЕТОВ полковникăн, ПОПОВ полковникăн, КОРСАНОВ генерал-майорăн, СТАРЫНИН полковникăн, МАРГУЛИС полковникăн, БАБИЧ полковникăн, КОРОЛЕВ полковникăн, ТУРЧАНИНОВ полковникăн, КОЛОТИЛОВ генерал-майорăн, ГОЛОВЧЕНКО полковникăн, ВЛАСЕНКО подполковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-полковникĕн РОДИНАН, ОПАРИН полковникăн, ШМЫРЕВ полковникăн, ЯИЧНИК полковникăн, ЛОБАНОВ полковникăн, ТИМОФЕЕВ подполковникăн, КАРТАШЕВ подполковникăн, ЗИРК подполковникăн, ВЕДЕХИН майорăн танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн ХРЮКИНАН, авиаци генерал-майорĕн БЕЛОВАН, авиаци генерал-майорĕн НЕЧИПОРЕНКАН, авиаци генерал-майорĕн ЗАХАРОВАН, ШИНКАРЕНКО полковникăн, АНДРЕЕВ полковникăн, ЧУЧЕВ полковникăн, ПРУТКОВ полковникăн, ХАТМИНСКИЙ полковникăн, ЗИМИН полковникăн, ЕГОРОВ полковникăн, ЗАКЛЕП подполковникăн, ЗАМОРИН майорăн, ЛАВРИНЕНКОВ майорăн, ДЕЛЬФИНО майорăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-лейтенанчĕн БАРАНОВАН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ЖИЛИНАН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн МЕЛЬНИКОВАН, СЕВОСТЬЯНОВ полковникăн, ЛОГИНОВ полковникăн, РЕИНСОН майорăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн БУРОВАН, çыхăну çарĕсен генерал-майорĕн МИШИНАН, КУРТУКОВ подполковникăн тата ЦИЛТОВ подполковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ВОРМДИТТ хулипе МЕЛЬЗАК хулине туртса илесшĕн çапăçнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, февралĕн 17-мĕшĕнче, 21 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр паттăр çарĕсене, асăннă хуласене туртса харăс персе, Белоруссири 3-мĕш фронтăн илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, ВОРМДИТТ хулипе МЕЛЬЗАК хулине туртса илесшĕн çапăçнăскерсене, пурне те тав тăватăп. пытĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТАВАТАП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе ниçама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ ***И. СТАЛИН.***

1945 çулхи февралĕн 17-мĕшĕ. № 282.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ФЕВРАЛĔН 16-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Февралĕн 16-мĕшĕнче пирĕн çарсем БЫДГОЩ (БРОМБЕРГ) хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата çурçĕртерехре малалла тапăнса пынă, КЛАЙН ТАШАУ, ЕШЕВО, ЛЯСКОВИЦ, БУЦИГ, ЛЮДВИГСТАЛЬ, КЛАЙН ГАЦНО, ШМИДЕБРУХ ялĕсене туртса илнĕ.

ПОЗНАНЬ хулинче тăшман гарнизонне пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă. ЦИТАДЕЛЬ районне тата ВАРТА шывĕн хĕвелтухăç хĕрринче хулапа пĕрлешсе ларнă тăватă яла хула гарнизонĕ çаплах хăй аллинче тытса тăрать-ха.

ГРЮНБЕРГ хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем малалла наступлени туса пынă, БОБЕР шывĕ çине тухнă, халăх пурăнакан 50 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра—РОТЕНБУРГ, ТИМЕНДОРФ, РУСДОРФ, ДОЙЧ ЗАГАР, КОССАР, ВЕЙСИГ, РЕЙХЕНАУ ятлă пысăк ялсем.

Февралĕн 15-мĕшĕнче ГРЮНБЕРГ хулинчен кăнтăртарахри районра пирĕн çарсем 1.500 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ тата склад-арсенал тытса илнĕ, унта 350 тупă, 1.500 тупă кĕпçипе миномет кĕпçи, 1.500 йывăр пулемет тата боеприпас нумай пулнă.

БРЕСЛАУ (БРЕСЛАВЛЬ) хули районĕнче пирĕн çарсем хула çине çурçĕр енчен, хĕвеланăç енчен тата кăнтăр енчен тапăнса пынă. БРЕСЛАУ (БРЕСЛАВЛЬ) хулине хўтĕлекен тăшман группировкине йĕри-тавра çавăрса илнĕ. Наступлени туса пырса, пирĕн çарсем ку районри халăх пурăнакан 200 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра—ХУНДСФЕЛЬД, ДОЙЧ ЛИССА, ВАНЗЕН хулисем тата МАРГАРЕТ, ДРАХЕНБРУНН, ЗАКРАУ, ПАШКЕРВИЦ, ШЕБИЦ, ШЕНГАРТЕН, ДОБРЮКК, КЛЕТТЕНДОРФ, КАТТЕРН, КРАФТБОРН ятлă пысăк ялсем.

БУДАПЕШТ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехри вăрмансенче пирĕн çарсем БУДАПЕШТ хулин хĕвеланăç пайĕнчен тарса тухнă тăшман ушкăнĕсене пурне те пĕтерсе тăкнă. Февралĕн 15-мĕшĕнче пирĕн çарсем ку районра тăшманăн 3.400 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ, çапăçу хирĕнче тăшманăн 300 пулеметне, 4.000 винтовкине тата 1.500 автоматне пухса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çўренĕ тата чылай пунктра тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Февралĕн 15-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 117 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 39 самолетне персе ўкернĕ.

☆ ☆ ☆

Познань хулинче пирĕн çарсем хупăрласа илнĕ тăшман гарнизонне пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă. Нимĕçсем Цитадельте, çавăн пекех тата Варта шывĕн хĕвелтухăç хĕрринче хулапа пĕрлешсе ларнă ялсенче вырнаçнă та хытă хирĕç тăраççĕ. Совет пехотинецĕсемпе артиллерисчĕсем, тăшманăн персе тăмалли вырăнĕсене тата унăн салтакĕсемпе офицерĕсене пĕтере-пĕтере, тăшмантан çурт хыççăн çурт тасатса пырса, малалла каяççĕ. Кун каçиччен гитлеровецсене 1.000 çынна çити пĕтерсе тăкнă. 78 пулемет, 3.000 винтовкăпа автомат, çар пурлăхĕн 2 складне, 3.000 снаряд тата 2000 граната тытса илнĕ. 550 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

* * *

Грюнберг хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем наступление малалла вăйлатса пынă. Шоссе çулĕсем хĕррипе тăшман хирĕç тăмалли узелсем туса тултарнă, вĕсене дотсемпе тата дзотсемпе вăйлатнă. Нимĕçсем çулсем хĕресленнĕ вырăнсене пуринчен те вăйлăрах çирĕплетнĕ. Совет пехотинецĕсем тата вĕсемпе пĕрле пыракан артиллеристсем, тăшмантан аякран иртсе кайса, нимĕçсен оборонин тĕреклетнĕ пункчĕсене хупăрласа илеççĕ те пĕтере-пĕтере тăкаççĕ. Пирĕн çарсем çапăçса 20 километр малалла кайнă та анлă фронтпа Бобер шывĕн анатри тăрăхĕ хĕррине тухнă. Вăйлă çапăçнă хыççăн совет чаçĕсем нимĕçсен оборонин вăйлă çирĕплетнĕ пункчĕ пулса тăракан Одер шывĕн сулахай хĕрринчи Ротенбург ялне тытса илнĕ. Кунта нимĕçсен укреплениĕсем шыв хĕрринелле тата çурçĕрелле пăхса ларнă. Пирĕн çарсем çак пысăк яла кăнтăр енчен тата кăнтăр-хĕвелтухăç енчен атакăланă. Урамсенчи çапăçусенче тăшман гарнизонне аркатса тăкнă. Трофейсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Бреслау (Бреславль) хули районĕнче хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Пирĕн çарсем ку хула çине хуларан çурçĕр-хĕвеланăçнерехри тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри плацдармсем çинчен ăнăçлăн тапăнса пынă, вара нимĕçсен оборонин питех те вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕ пулса тăракан тата промышленноçăн пысăк центрĕ пулса тăракан Бреслау хулине йĕри-тавра тенĕ пекех çавăрса илнĕ. Тăшман аллинче пĕр 8 километр сарлакĕш коридор кăна тăрса юлнă. Нимĕçсем Бреслау хулипе Фаркейштайн хули хушшинчи чугун çулпа шоссе çулне тем пулсан та хăйсен аллинчех тытса хăварма тăрăшнă. Совет чаçĕсем виçĕ енчен те хăватлăн пырса çапнă та, гитлеровецсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, паян Бреслау хулине йĕри-тавра хупăрласа илнĕ. Çитĕнĕве вăйлатса пырса, пирĕн çарсем халăх пурăнакан 200 пункта ытла туртса илнĕ. Нимĕçсене Бреслау хулинчен 7 километр çурçĕр-хĕвеланăçнерехре ларакан Дойч Лисса хулинчен тата Бреслау хулинчен 6 километр кăнтăртарахра ларакан Каттерн ялĕнчен сирпĕтсе кăларнă. Кун каçиччен нимĕçсен 37 танкне, 16 бронетранспортерне, 50 туппине ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Пирĕн çарсем Будапешт хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехри вăрмансенче хулан хĕвеланăç пайĕнчен тухса тарнă тăшман ушкăнĕсене пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнĕ нимĕç салтакĕсен нумайĕшĕсен ылттăн сехетсем, ылттăн е кĕмĕл кашăксем тата çавăн пек ытти хаклă япаласем пулнă. Çав япаласене нимĕçсем Будапешт хулинчи çынсене çаратса тупнă.

* * *

Юлашки кунсенче Хĕвелтухăç Пруссире пирĕн çарсем нимĕç офицерĕсен пысăк ушкăнне тыткăна илнĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕ тыткăна хăйсен подразделенийĕсен салтакĕсемпе пĕрлех парăннă. Нимĕçсен 286-мĕш охраннăй дивизийĕнчи 927-мĕш полкăн штабне тыткăна илнĕ. Тыткăна илнисен шутĕнче полк командирĕ Вильгельм Фоссе майор тата унăн адъютанчĕ Клаус Вейде обер-лейтенант пур. Çав Клаус Вейде çапла каласа кăтартнă: «Полк штабĕпе дивизи командованийĕ хушшинчи çыхăну пĕтсе ларчĕ, çавăн пекех полк штабĕпе унăн подразделенийĕсем хушшинчи çыхăну та пĕтрĕ. Эпир вăрмана тартăмăр, вара унта пире виçĕ кун хушши çухалса çўренĕ хыççăн тыткăна илчĕç».

280-мĕш дивизирен тыткăна лекнĕ лейтенант Рихард Мюллер çапла каласа кăтартнă: «Йывăр çапăçусем пулса иртнĕ хыççăн салтаксен сапаланса пĕтнĕ пĕчĕк ушкăнĕсем дивизин сборнăй пунктне пухăнчĕç. Мана çав ушкăнсенчен тупнă ротăн командирне лартрĕç. Салтаксем тарса ан пĕтчĕр тесе, мана командовани вĕсенчен пуринчен те салтак кĕнекисене пуçтарса илме хушрĕ. Анчах кун пек хăтланни те пулăшмарĕ. Ман кăçсем салтак кĕнекисемпе туп-туллиехчĕ, анчах та манăн алăра салтаксем юлмарĕç. Вĕсем пурте тенĕ пекех тарса пĕтрĕç. Эпĕ алла султăм та вырăссене хирĕç утрăм, вара вĕсене тыткăна парăнтăм».

Тепĕр участокра нимĕçсен запасри 400-мĕш батальонĕн командирĕ Гельмут Пауль лейтенант тыткăна парăннă, вăл хăйпе пĕрле 76 салтак илсе пынă. Çаз лейтенант çапла каласа кăтартнă: «Хĕвелтухăç Пруссире хупăрласа илнĕ нимĕç чаçĕсенче вăйлă пăтрашу пырать. Командовани юлашки салтак пĕтиччен тытăнса тăма приказ панă, анчах та ун пек приказа пурнăçа кĕртме çук. Малалла хирĕç тăни нимусăсăр пулнине салтаксем лайăх кураççĕ. Вĕсенчен чылайĕшĕ салтак тумтирне пăрахрĕç те граждансла халăх тумтирне тăхăнчĕç, манăн приказсене итлеми пулчĕç. Эпĕ çак 1945 çулхи январь уйăхĕнче курса тўснисем хыççăн малалла çапăçни ухмахла ĕç туни пулĕччĕ. Хам батальонăн юлашкийĕсене эпĕ пĕр çĕре пухрăм та вĕсемпе пĕрле тыткăна парăнтăм».

Паян профсоюзпа комсомолăн йĕлтĕрлĕ кросĕ пуçланать

Паян республикăри хуласемпе район центрĕсенче, рабочи поселокĕсенче, колхозсемпе шкулсенче профсоюзпа комсомолăн йĕлтĕрлĕ кросĕ пуçланать. Вăл февралĕн 25-мĕшĕччен пымалла. Совет çамрăкĕсем Хĕрлĕ Çар 27 çул тултарнине çак пысăк мероприятие ирттернипе паллă тăваççĕ.

Йĕлтĕрлĕ кросс—халăха йĕлтĕрпе çўреме вĕрентес тата вĕсене ГТО нормине пама анлăн хатĕрлес тĕлĕшпе пулса иртмелле. Çавăн пекех кросра халăха йĕлтĕрпе çўреме вĕрентес тĕлĕшпе лайăх ĕçлекен профсоюзпа комсомол тата физкультура организацийĕсем, шкулсемпе всевобуч подразделенийĕсем палăрĕç.

Профсоюзпа комсомолăн тата физкультура организацийĕсен халь ĕççыннисене кроса йышлăн явăçтарас, ăмăртăва пахалăхлăн ирттерес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлемелле. Ăмăрту ГТО нормисем тăрăх пулса иртет. Çавăнпа та вăл пĕр кунлăх кампани çеç мар, хĕллехи вăхăтра çарпа физкультура ĕçне вĕренме пулăшакан мероприяти пулса тăмалла. Ăмăртура палăрнă физкультурниксене спорт командисемпе секцисене явăçтармалла, вĕсене хăйсен пултарулăхне ўстерсе пыма пулăшмалла.

Профсоюзпа комсомол тата физкультура организацийĕсем йĕлтĕрлĕ ăмăртусем ирттерес тĕлĕшпе пысăк опытсем тупнăчĕç. Çав опытсемпе туллин усă курмалла та ĕнтĕ халь. Профсоюзпа комсомол тата физкультура организацийĕсен руководителĕсен, паллах, чи малтан хăйсен кроса хутшăнмалла. Вара вĕсен агитацийĕ ĕçри чăн-чăн примерпа çыхăнса тăрĕ. Çак мероприятие ирттернĕ вăхăтра агитацине пропаганда ĕçне фронтовиксене явăçтарни питех те усăллă пулĕ. Вĕсем, фронтра пулнăскерсем, йĕлтĕр спорчĕн вăрçă вăхăтĕнчи пĕлтерĕшĕ çинчен халăха ăнлантармалла та ĕнентермелле каласа парĕç. Вăрçăри боец-физкультурниксен примерĕсене илсе кăтартĕç.

Парти организацийĕсем те çак ĕçре пулăшу пама тивĕç. Вĕсем ĕçе тивĕçлипе ертсе пырсан тата кирлĕ пек пулăшса тăрсан, паллах, ăмăрту ăнăçлăн иртĕ.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕпе ВЦСПС йышăннă тăрăх, ăмăртура мала тухнă юлташсене тĕрлĕрен наградăсем параççĕ. Ăмăртура мала тухасси вăл çăмăл ĕç мар. Анчах тепĕр чухне хăшпĕр çамрăксем çĕнтерўçĕ çăмăллăн пуласса шанса тăраççĕ. Çавăнпа ăмăртăва чăнласа, ĕçлĕн те тимлĕн хатĕрленмеççĕ. Çапла, Шăхасан, Сĕнтĕр, Тăвай, Комсомольски, Куславкка районĕсем пикенсе ĕçлемен пирки колхоз çамрăкĕсен йĕлтĕрлĕ ăмăртăвне организованно ирттереймен. Первомайски тата Вăрмар районĕсенче хисепшĕн, цифрăшăн кăна тăрăшнă. Çавна пула вĕсем республикăри ăмăртăва начар командăсем тăратрĕç. Çакăн пек йăнăшсем тепĕр хут пуласран асăрханас пулать. Кроса массăллăн ирттермелле. Анчах ăна пула спорт пахалăхне чакарма юрамасть.

Профсоюзпа комсомолăн йĕлтĕрлĕ кросне пысăк пахалăхпа ирттерме пирĕн пур майсем те пур. Çамрăксем, паян старта йышлăн тухса, кросăн малтанхи кунĕнчен пуçласах ĕçе организованно тытăнăр!

Г. ПЕТРУХИН,
ВЛКСМ Обкомĕн çарĕç енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

Чугун çул валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе хĕрўллĕнрех ĕçлер!

Февраль—вăрманти ĕçсен чи хĕрўллĕ тапхăрĕ. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ ăна вăрман хатĕрлевĕнче фронтри пек ĕçлемелли уйăхлăх тесе пĕлтерчĕç. Çав уйăхлăхăн малтанхи çуррийĕ иртрĕ ĕнтĕ. Малта пыракан районсемпе вăрман хатĕрлекен организацисем, уйăхлăх кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вутă хатĕрлес ĕçре паллă çитĕнўсем турĕç. Куславкка, Сĕнтĕрвăрри тата Пăрачкав районĕсем кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вутă хатĕрлесе турттармалли плана тултарчĕç. Сĕмĕрлепе Первомайски районсем те плана тултарса çитереççĕ. Асăннă районсем çав çитĕнĕве вăрман хатĕрлевне ĕç вăйĕ çителĕклĕ уйăрса панипе, вутă хатĕрлекенсемпе турттаракансем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса янипе тата вĕсен ĕçри ăмăртăвне ятарласа янă уполномоченнăйсем урлă тăтăшах тĕрĕслесе тăнипе турĕç. Малта пыракан районсем тунă çитĕнўпе лăпланса ларма шутламаççĕ, вăрманта малашне те ĕçлесе, чугун çул валли вутă хатĕрлемелли плана ирттерсе тултарма пулаççĕ. Сăмахран, Куславкка районĕ февралĕн 23-мĕшĕччен плана 20 процент ирттерсе тултарма, çапла майпа Хĕрлĕ Çара производствăллă парне кўме обязательство илнĕ. Куславкка районĕн лайăх примерне ытти районсен те йышăнмалла. Хĕрлĕ Çар уявне вутă хатĕрлемелли плана тултарнипе паллă тумалла.

Вăрман хатĕрлекен предприятисенчен чугун çул валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе Улатăр, Кире тата Йĕпреç вăрман хуçалăхĕсем малта пыраççĕ. Улатăр вăрман хуçалăхĕ çак сезонра вутă хатĕрлемелли плана февралĕн малтанхи вунăкунлăхĕнчех ирттерсе тултарнăччĕ. Асăннă вăрман хуçалăхĕсен руководителĕсем вутă касакансемпе турттаракансен ĕçне организацилеме пĕлеççĕ, ĕçлекенсене кирлĕ условисем туса параççĕ, социализмлă ăмăртăва ертсе пыраççĕ.

Анчах та республикăра фронтри пек ĕçлемелли уйăхлăха начар хутшăннă районсемпе предприятисем те пур-ха. Ялхуçалăх ĕçĕсенче начар мар ĕçлекен Сĕнтĕр, Красноармейски, Элĕк районĕсем чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлес ĕçре сăлтавсăрах юлса пыраççĕ. Красноармейски район кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вутă хатĕрлемелли плана февралĕн 15-мĕшĕ тĕлне касас енĕпе 74 процента яхăн, турттарас енĕпе 58 процент çеç тултарнă. Район çакăн пек юлса пыни, чи малтанах, вăрманта ĕçлеме кирлĕ ĕç вăйне çителĕксĕр парса тăнинчен килет. План тăрăх, вăрман хатĕрлевĕнче районри колхозсенчен 434 çын çуран, 386 çын лашапа ĕçлемелле. Чăннипе февралĕн малтанхи кунĕсенче çав хисепрен çурри çеç вăрманта ĕçленĕ. Район руководителĕсем çакна курса тăраççĕ пулин те чугун çул валли вутă хатĕрлеме тивĕçлĕ ĕç вăйне çителĕклĕ уйăрса пама тăрăшмаççĕ.

Фронтовой уйăхлăхра çавăн пекех Кувакино, Тăвай, Элĕк тата ытти районсем те çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Ку районсем чугун çул валли вутă хатĕрлемелли плана çурри ытларах çеç тултарнă.

Союзлă виçĕ держава руководителĕсен Крымра пулса иртнĕ конференцийĕн решенийĕсемпе хавхаланса тата мухтавлă Хĕрлĕ Çар 27 çул тултарнине тивĕçлипе паллă тума хатĕрленсе, республикăри промышленность предприятийĕсен коллективĕсем ĕç тухăçлăхне татах та ўстереççĕ, февраль уйăхĕнчи программăна срокчен тултарма пулаççĕ. Вăрман хатĕрлекен организацисемпе районсен те промышленность предприятийĕсенчен юлмалла мар, вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе иртекен фронтовой уйăхлăхра чугун çул валли вутă хатĕрлемелли плана тултармалла, тăван Хĕрлĕ Çар 27 çул тултарнине тивĕçлипе паллă тумалла.

Колхоз выльăх-чĕрлĕхне ĕрчетес ыйтусемпе пухнă канашлу

Февралĕн 15-мĕшĕнче колхоз выльăх-чĕрлĕхне ĕрчетес ыйтусемпе пухнă канашлу хупăннă, ăна СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ пухнă. Государствăн 1944 çулта выльăх-чĕрлĕх тата лаша ĕрчетмелли планне мĕнле пурнăçа кĕртсе пыни çинчен, 1945 çулхи задачăсем çинчен, ветеринари ĕçне лайăхлатасси çинчен, выльăх апачĕ никĕсне тĕреклетесси çинчен, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен колхозниксене ĕçшĕн хушса тўлесси çинчен тунă докладсене сўтсе-явнă.

Канашлу çавăн пекех тата Украина, Казах, Азербайджан тата Грузи республикисенчи, Калининпа Новосибирск облаçĕсенчи çĕр органĕсен представителĕсен содоклачĕсене итленĕ. Тĕрлĕ докладсене секцисенче сўтсе-явнă. Канашлу ăратлă выльăх ĕрчетес, колхозсене ветеринарипе зоотехника енчен пулăшас, лаша ĕрчетес тата ытти ыйтусем тăрăх та секцисем тунă.

Канашлу ĕçĕсене Наркоммясомолпром, Наркомтекстильпром тата Наркомлегпром работникĕсемпе наркомĕсем, Пĕтĕм Союзри Ленин ячĕпе тăракан ялхуçалăх академийĕн президенчĕ Лысенко академик, Скрябин академик, профессорсем тата наукăпа тĕпчев институчĕсемпе опытлă станцисен работникĕсем хутшăннă.

Канашлăвăн юлашки ларăвĕнче ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ А. А. Андреев юлташ сăмах тухса каланă. (ТАСС).

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Промысла коопераци артелĕсен 1945 çулхи январь уйăхĕнчи итогĕсем çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ промысла коопераци артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1945 çулхи январь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă. Ăмăртура çаксем мала тухнă тесе йышăннă:

Шупашкарти «Пекарь» артель. Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çўрекен Хĕрлĕ ялавне, Етĕрнери Сталин ячĕпе тăракан артельрен илсе, «Пекарь» артеле памалла тунă тата ăмăртура палăрнă работниксене премилеме ăна 8.000 тенкĕ укçа панă.

Чăваштарпромсоюз системине кĕрекен **Чурачăкри артель** (артель председателĕ Грошев юлташ, Ишлей райсовет исполкомĕн председателĕ Петров юлташ). Ăна ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 3.000 тенкĕ укçа панă.

Чăваштарпромсоюз системине кĕрекен **Тăрăнри артель** (артель председателĕ Николаев юлташ). Ăна ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 3.000 тенкĕ укçа панă.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çавăн пекех иртнĕ уйăхра Улатăрти «Красная Звезда», Сĕнтĕрвăрринчи «Парижская Коммуна», Канашри «Авангард», Сĕнтĕр районĕнчи «Кожевник», Караньялĕнчи «Труд», Канашри «Швейник» тата ытти артельсем лайăх ĕçленине палăртнă.

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариатĕнче

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариачĕ, предприятисен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1945 çулхи январь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Котов тата Слуцкий юлташсем главнăй инженер пулса ĕçлекен заводсене иккĕмĕш премине пама йышăннă.

РИГАРИ ÇĔНЕ ЦЕМЕНТ ЗАВОЧĔ

Латвири чи пысăк цемент заводне юсаса çитернĕ. Пит пысăк армансем, транспортерсем тата электричество хуçалăхĕ пĕр чарăнмасăр ĕçлесе тăраççĕ. Туса кăларнă паха цементăн темиçе çĕр тоннине Двина шывĕ урлă хывмалли кĕперсем патне илсе пынă та ĕнтĕ. (ТАСС).

Вăрман хатĕрлевĕнчи фронтри пек ĕçлемелли уйăхлăх

Чугун çул валли вутă планпа пăхнинчен ытларах хатĕрлетпĕр

КУСЛАВККА. (Телефонпа). Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ февраль уйăхĕнче вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе фронтри пек ĕçлемелли уйăхлăх ирттересси çинчен пĕлтерсенех, район çак уйăхлăха активлăн хутшăнчĕ. Район чугун çул валли вутă хатĕрлемелли плана Хĕрлĕ Çар уявĕ тĕлне тултарма обязательство илчĕ. Халĕ эпир çав обязательствăна тултарни çинчен пĕлтерме пултаратпăр. Февралĕн 15-мĕшĕ тĕлне пирĕн район вутă хатĕрлемелли плана касса хатĕрлес енĕпе 104,5 процент, турттарас енĕпе 109 процент тултарчĕ. Вутă хатĕрлес ĕçе хутшăннă 50 колхозран 47-шĕ хăйсен заданийĕсене тултарчĕç. Вăрман хатĕрлевĕнче уйрăмах «Победа», «Большевик», «Труд», «Коммунист» тата «Красный Курган» колхозсем лайăх ĕçлерĕç. Вĕсем хăйсен заданисене çĕнĕ çулччен пурнăçларĕç, ун хыççăн заданирен ирттерсе вутă хатĕрлерĕç.

Буинскри вăрманпромхозра вутă турттаракансем Емельянов («Динамо» колхозран), Павлов (Калинин ячĕпе тăракан колхозран) кулленхи нормăран 2 хут тухăçлăрах ĕçлерĕç. «Большевик» колхоз членĕ Пименов юлташ вутă турттармалли нормăна 250 процент тултарса пычĕ.

Район чугун çул валли вутă хатĕрлемелли плана тултарчĕ пулин те, вăрман хатĕрлевĕнче малашне те ĕçлет. Союзлă виçĕ держава руководителĕсен Крымри конференцийĕн решенийĕсем çине ответлесе, районри колхозсем чугун çул валли вутă хатĕрлемелли плана Хĕрлĕ Çар уявĕ тĕлне 15—20 процент ирттерсе тултарма обязательство илчĕç.

Н. ПРЫТЧЕНКОВ,
Райсовет исполкомĕн председателĕ.

Сăмах пани мар, ĕç туни кирлĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Телефонпа). Район чугун çул валли вутă хатĕрлес ĕçре юлса пырать. Фронтовой уйăхлăхăн малтанхи 10 кунĕнче район 3.750 кубометр вутă хатĕрлес, 4.200 кубометр турттарас вырăнне 1.300 кубометр çеç каснă, 756 кубометр çеç турттарнă. Районри икĕ колхоз кăна уйăхлăхри ĕçсен графикне тултарса пыраççĕ, ытти колхозсем вăрман хатĕрлевĕнче начар ĕçлеççĕ. Красноармейски ял Советĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз—пысăк колхоз. Унăн 862 кубометр вутă хатĕрлемелле, 1.263 кубометр турттармалла. Паянхи кун тĕлне колхоз планăн сахал пайне çеç тултарнă. Колхоз вăрман хатĕрлевĕнче юлса пыни ĕç вăйĕ çителĕксĕр яниччен килет. Çак ял Советĕнчи «Осоавиахим» колхоз та уйăхлăха кирлĕ пек хутшăнман. Кушар ял Советĕнчи колхозсем те вăрман хатĕрлес ĕçе хаклamaççĕ.

Район чугун çул валли вутă хатĕрлес ĕçре юлса пынине халех пĕтермелле.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

Вăрман хатĕрлес ĕçе кашни колхозăн активлăн хутшăнмалла

ÇЕРПУ. Кипекçе ял Советĕнчи «Емĕт», «Молот», «Серп», Вĕрмер ял Советĕнчи «КИМ», «Боевик» колхозсем чугун çул валли вутă касса хатĕрлес плана вăхăтра тултарса пыраççĕ. Çавăн пекех Кăшаркасси ял Советĕнчи «Пионер» тата Буденный ячĕпе тăракан колхозсем те ку тĕлĕшпе аван ĕçлеççĕ. «Пионер» колхозри А. Львов, И. Ермолаев колхозниксем кунне 2,5 кубометр вутă касас вырăнне 3—4-шар кубометр касаççĕ. Лашапа ĕçлекенсем А. Семенова, М. Матвеева колхозницăсем нормăна кунсерен 110—120 процент тултараççĕ.

Анчах районра чылай колхозсенче чугун çул валли вутă хатĕрлесси çителĕксĕр пулса пырать-ха. вĕсем ĕçпе туртăм вăйĕ çителĕклĕ уйăрса памаççĕ. «Прожектор», «Дружба», «Авангард», «8 марта» колхозсем вăрман ĕçĕнче уйрăмах юлса пыраççĕ.

А. ИВАНОВ.

Хĕрлĕ Çар хăватне ўстерме

КУКЕÇ, февралĕн 17-мĕшĕ. (Телефонпа). Çĕньял Уйкассинчи «Арăслан» артель коллективĕ январь уйăхĕнчи плана 152 процент тултарчĕ. Февральте малтанхи 10 кун хушшинчех уйăхри плана 55 процент тултарчĕ.

Артель коллективĕ, Союзлă виçĕ державăн—Совет Союзĕн, Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсен тата Великобританин—руководителĕсен Крымра пулса иртнĕ Конференцийĕн материалĕсемпе паллашнă хыççăн, çĕнтерў сехетне çывхартма Хĕрлĕ Çара тата вăйлăн пулăшма сăмах пачĕ. Артель хăйĕн тупăшĕнчен Хĕрлĕ Çар фондне 3.100 тенкĕ парать, февральти плана Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне 150 процент тултарма пулчĕ. Андреев, Прохорова, Аристархова, Тимофеева, Иванова, Егоров тата ытти юлташсем, пĕр-пĕрнипе ăмăртса ĕçлесе, нормăна 150—250-шар процент тултарса пыма тытăнчĕç.

Г. ПЕТРОВ.

Парăмсене срокчен тўлеççĕ

ÇЕРПУ. Хĕрлĕ Çар 27 çул тултарнă ятпа Вĕрмер ял Советĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем 1945 çулхи укçа-тенкĕ парăмĕсене срокчен тўлеççĕ. Нумай колхозниксем çак кунсенче вăрçă вăхăтĕнчи налога, сулăм укçине парса татрĕç.

«КИМ» колхозри В. Кириллов, П. Тимофеев, И. Димитриев, Н. Филиппова, «Боевик» колхозри К. Николаев, «Ударник» колхозри М. Михайлова тата М. Иванова юлташсем вăрçă вăхăтĕнчи налог укçине срокчен тўлесе татрĕç. Паянхи кун тĕлне ял Совечĕ вăрçă вăхăтĕнчи налог укçине 5.971 тенкĕ пухнă. Вăл плана 60 процент ытла тултарни пулать.

Парти пурнăçĕ

Ĕçпе вĕренӳре

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Чуракассинчи «Правда» колхозри парторганизаци коммунистсен вĕренĕвне йĕркелесси çинчен пухура ятарласа сӳтсе явнă. Пуху парторганизаци çумĕнче политшкул организацилеме йышăннă.

Халĕ ĕнтĕ политшкул йĕркеллĕ ĕçлет. Политшкулта 7 коммунист вĕренет. Ку тариччен политшкулăн 7 заняти пулса иртнĕ. Çав занятисенче «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕн» тăватă сыпăкне вĕренсе пĕтернĕ, 5-мĕш сыпăк тăрăх пĕр заняти иртернĕ. Занятисене хатĕрленнĕ чухне коммунистсем Сталин юлташ çырнă «Вопросы ленинизма» ятлă кĕнекепе усă курассĕ. Калаçусене иртернĕ чухне вĕсем çине тăрса вĕреннине курма пулать.

Политшкул руководителĕ Герасимов юлташ занятие тĕплĕн хатĕрленет. «Большевиксен партине туса хурассишĕн кĕрешни» тема тăрăх калаçу иртерме хатĕрленнĕ чухне вăл Сталинăн «Вопросы ленинизма» кĕнекине, Ленинăн «Материализм и эмпириокритицизм» ятлă кĕнекине, партин 18-мĕш съезчĕн материалĕсене, Ленинăн икĕ томлă кĕнекинчи материалсене вуласа тухса, конспект çырнă.

Вĕреннĕ темăсем тăрăх калаçусем иртересси çăмăл мар. Калаçусем интереслă тата усăллă иртчĕр тесен, малтанах лайăх хатĕрленес пулать. Çак йĕркене кунта лайăх тунă. Калаçусем пуличчен пĕр-икĕ кун малтан семинар туса иртерессĕ. Семинарта вĕренекенсем пĕр-пĕрне ыйтусем парассĕ, ыйтусем çине ответлессĕ. Хăйсен пĕлĕвĕсене вĕсем малтан семинарта тĕрĕслессĕ. Коммунистсене калаçу пулассине пĕр кун малтан пĕлтерессĕ.

Политшкулта вĕренекенсем занятисене мĕнле çӳренине шута илме ятарласа журнал тунă. Çав журнал çине кам мĕнле çӳренине яланах паллă туса пырассĕ. Коммунистсенчен кам та пулсан занятине сăлтавсăр пымасан е хатĕрленмесĕр пырать пулсан, ун çинчен пухура сӳтсе явассĕ.

Коммунистсем хăйсен пĕлĕвне ӳстерсе пынă май, вĕсен ĕçри активлăхĕ ӳсет. Вĕсем хăйсене хушнă ĕçе вăхăтра пурнăçласа пырассĕ.

Парторганизацинчи коммунистсем хăйсен пуххăвĕсенче фронта пулăшас, комсомол организацин ĕçне лайăхлатас, вылăх-чĕрлĕхсен йышне ӳстерес, коммунистсен политикăллă пĕлĕвне ӳстерес ыйтусене лартса сӳтсе явнă. Çав ыйтусем тăрăх тивĕçлĕ решенисем йышăннă. Фронта ытларах пулăшас ыйтусем тăрăх колхозниксем хушшинче докладсемпе калаçусем иртернĕ. Государствăна тырă вăхăтра парса татнă. Планран иртерсе Хĕрлĕ Çар фондне тырă чылай панă. Вылăх-чĕрлĕхсен йышне ӳстерес ыйтупа та коммунистсем чылай ĕçленĕ. Вылăх ĕрчетмелли плана тултарнă, вылăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрленĕ.

Кăçал январь уйăхĕнче коммунистсен пуххăвĕ икĕ хут пулнă. Çак пухусенче çуракине хатĕрленес ĕçсене хăвăртлатмалли тата чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлес плана тултармалли майсене палăртнă. Çуракипе хатĕрленес енĕпе чылай ĕçсем туса иртернĕ. Вăрлăхсене сортласа пĕтернĕ. Кашни бригадăрах çураки вăхăтĕнче кам мĕн ĕçлемеллине палăртса хунă.

Коммунистсем хăйсен пуххăвĕнче йышăннă решенисене яланах пурнăçлассĕ. Иртнĕ пухура чугунçул валли вутă хатĕрлемелли плана срокчен пурнăçа кĕртме йышăннă. Халĕ вăрманта çуран 12 çын, лашапа 12 çын ĕçлессĕ. Вĕсем мĕн пурĕ 1000 кубометр вутă хатĕрленĕ, 1124 кубометр турттарнă.

С. ШАДИН.

Ӳкерчĕк çинче: Елчĕк районĕнчи «Марс» колхозри агрокружок заняти иртерет. Сылтăмран сулахаялла: Галеев (колхозник), Хисамова (бригадир), Хасьянова (бригадир), Сабирулин (кружок руководителĕ), Сайфудинов (колхозник), Зимальдинова (бригадир).

С. ФРИД фотоӳкерчĕкĕ.

Çуракине хатĕрленес ĕçе большевикла ертсе пымалла

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Совет», «Трактор», «Коминтерн», «Агроном», «Красное Знамя», ВКП(б) ячĕпе тăракан тата ытти хăшпĕр колхозсем те кăçал çуракине начар мар хатĕрленессĕ. Çак колхозсем вăрлăх çителĕклĕ тăран хывнă, вĕсене сортланă тата акмалли кондицие çитернĕ. Плугсене, сӳресене тата ытти ялхуçалăх машинисене юсаса хатĕрленĕ. Уй-хире тислĕк кăларасси тата выранти ытти удобренисене пухасси те çак колхозсенче лайăх пырать. Колхозниксемпе колхозницăсем пикенсех агротехникăна вĕренессĕ.

«Трактор» колхоз (председателĕ Ярдушкин юлташ) пур тĕрлĕ вăрлăхсене те çителĕклĕ уйăрнă. Пурĕ 435 центнер вăрлăх пĕтĕмпех сортланă, вĕсен шăтас пахалăхне тĕрĕсленĕ тата акмалли кондицие лартнă. Иртнĕ кĕркунне тата кăçал хĕлле хире 2400 лав тислĕк кăларнă, 52 центнер кĕл, 32 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрленĕ. Çуракине валли 30 плуг, 20 сӳре, 2 сеялка юсанă, 40 урапа тата ут таврашĕсене пĕтĕмпех юсаса хунă.

«Коминтерн» колхозра та (председателĕ Кузнецов юлташ) вăрлăхсем çителĕклĕ, вĕсене лайăх сортласа хунă. Хире 3200 лав тислĕк кăларнă, 500 лав торф хатĕрленĕ. 82 центнер кĕл, 35 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. 128 гектар çинче юр тытнă. 24 плуг, 60 сӳре, 4 сеялка, 3 триер, 6 сортировка, 48 урапа юсаса хунă. Колхозниксемпе колхозницăсем халĕ агрокружокра вĕренессĕ. Кружока 80 çын ытла çӳрет, вĕсене колхоз агрономĕ Мерескина юлташ вĕрентет.

Анчах та, пĕтĕм районĕпе илсен, çуракине хатĕрленес ĕç çителĕклĕ пырать теме çук-ха. Чылай колхозсенче вăрлăх çителĕксĕр. «Авангард» колхозăн 225 центнер, Молотов ячĕпе тăракан колхозăн 93 центнер, Каганович ячĕпе тăракан колхозăн 87 центнер, «Ударник» колхозăн 52 центнер, «Первое мая» колхозăн 69 центнер тĕштырă вăрлăхĕсем çитмессĕ. Уйрăмăнах «Будь готов», «Великан», «Красное Сормово», Калинин, Сталин, Буденный ячĕпе тăракан колхозсенче вăрлăхсем нумай çитмессĕ. Апла пулсан та, çак колхозсен руководителĕсем вăрлăх хатĕрлес тĕлĕшпе кирлĕ пек ĕçлемессĕ.

Колхозпа колхоз хушшинче вăрлăх улăштарса илмелли фонда 552 центнер тырă уйăрнă. Вăл шутра тулă 95 центнер, сĕлĕ 372 центнер, урпа 88 центнер, йĕтĕн вăрлăхĕ 29 центнер пур. Вăрлăх улăштарса илес ĕçе организацилесси—колхозсен тата район руководителĕсен паянхи задачи пулса тăрать.

Уйрăм колхозсем çитмен вăрлăхсене укçан илессĕ. Молотов ячĕпе тăракан колхоз 300 пăт, Калинин ячĕпе тăракан колхоз 200 пăт, «Красный маяк» колхоз 400 пăт вăрлăхлăх çĕрулми сутăн илнĕ. Çак пуçарăва анлăн сарса пыма тăрăшмалла.

Вăрлăхсене сортлас енĕпе район хăйĕн планне 80.3 процент тултарнă. Контроль-лабораторийĕнче вăрлăхсене шăтаслăх енчен 11.240 центнер, тасалăх енчен 2.860 центнер тĕрĕсленĕ. Вăрлăх пахалăхне ӳстерес тесе, кашни колхозăн пикенсе ĕçлемелле.

Районра выранти удобренисем хатĕрлесси те çителĕксĕр пырать. Хире тислĕк кăлармалли плана пурĕ те 42 процент кăна тултарнă. Кĕл пухмалли плана 62,3 процент, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухмалли плана 51 процент тултарнă. Фекали никăш колхозра та пухмассĕ.

Ялхуçалăх машинисене юсас ĕç районри чылай колхозсенче начар пырать. Паянхи кун тĕлне юсама тивĕçлĕ плугсенчен 40 процентне, сеялкăсенчен 30 процентне кăна юсанă.

Колхоз кадрĕсем хатĕрлемелли план тăрăх, колхоз счетовочĕсем 35 çын, агротехниксем 32 çын, колхоз председателĕсем 24 çын кĕске срокла курсра вĕрентсе хатĕрлемелле. Ку ĕç те юлса пырать-ха. Пурĕ те колхоз счетовочĕсем 22 çын, агротехниксем 17 çын, колхоз председателĕсем 15 çын вĕрентсе хатĕрленĕ. Уйрăмăнах районри колхозсенче агротехникăна вĕренмелли кружоксене организацилесси япăх пырать. Паянхи кун тĕлне районĕпе пурĕ те 14 агрокружок кăна ĕçлет. Унта 1200 çын вĕренет. Агрокружоксене кашни колхозрах организацилемелле, унта колхозниксен анлă массине явăçтармалла.

Çуракине пур енчен те тĕплĕн хатĕрлесси—пысăк ĕç. Килес çулхи тырă тухăçлăхĕ çуракине вăхăтра тата лайăх хатĕрленнинчен килет. Çакна асра тытса, кашни колхоз хăйĕн пур членĕсене те çуракине хатĕрленес ĕçе мобилизацилемелле, колхоз руководителĕсем çак ĕçе большевикла ертсе пымалла.

А. МОИСЕЕВА.

Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери конференцийĕнче

ХИЛЛМЭН ДОКЛАЧЕ ТĂРĂХ ПЫНĂ ПРЕНИСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцийĕнче профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери çĕнĕ пĕрлешĕвĕ çинчен Хиллмэн докладĕ тăрăх пренисем пынă.

Австрали делегацийĕ ячĕпе Торнтон сăмах тухса каланă, вăл Хиллмэн тунă сĕнӳсене йышăннă.

Хиллмэна хирĕç «Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери пĕрлешĕвĕн» (МОП) секретарĕ Шевенельс каланă. Хиллмэн МОП ĕçне критикленĕ пирки вăл «тарăхни» çинчен калаçа панă.

Хиллмэн пĕрлешме чĕннине Шевенельс «мистика» тесе хакланă. Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацине туса хурас тĕлĕшпе МОП-а урăхлатса çĕнетме пулать, тенĕ.

Палестинăри еврей рабочийĕсен пĕтĕмĕшле федерацийĕн представителĕ Рабинович çав федераци Хиллмэн сĕнĕвĕсемпе килĕшни çинчен каланă хыççăн конференцире В. В. Кузнецов юлташ сăмах тухса каланă.

Февралĕн 13-мĕшĕнчи касхи ларура Ситрин тухса каланă. Вăл профсоюзсен пĕтĕмĕшле пĕрлешĕвне тума тăрăшнине саламланă. Çав вăхăтрах вăл МОП ĕçне тата Америкăри ĕç федерацийĕн ĕçне Хиллмэн критикленипе килĕшмен. Хальхи конференци мандатлă тата консультаци паракан конференци кăна пулнине Ситрин тепĕр хут палăртса хăварнă. Британи делегацийĕ, тенĕ вăл, нумай сасăпа мар, пĕр сасăлăн йышăнни çеç килĕшӳллĕ пулать тесе шутлать,—тенĕ.

«Çĕнĕ пĕрлешӳ туса,—тенĕ вăл,—профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери пĕрлешĕвĕсене тата профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери секретариачĕсене пăрахăçа кăларни аслă ĕç пулман пулĕччĕ. Вĕсен ситменлĕхĕсем кирек епле пулсан та вĕсем юлашки 25 çул хушшинче профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери юхăмĕн ĕçлесе тăракан пĕртен-пĕр органĕсем пулса тăнă».

Ситрин тухса калас умĕн Францин пĕтĕмĕшле ĕç конфедерацийĕ ячĕпе Фрашон каланă, вăл Хиллмэн сĕннине ырланă. Фрашон çапла каланă: «пĕтĕм тĕнчери рабочисем пĕтĕм тĕнчери вăйлă çĕнĕ организацине туса хума кирлине курса тăрассĕ. Çавăн пекех вĕсем пĕрлĕх кирлине те пĕлсе тăрассĕ, мĕншĕн тесен пĕрлĕх пулмасан, вĕсен ĕçĕ ăнса пыма пултараймасть. «Иртнĕ эрнере,—тенĕ Фрашон,—Ситрин профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери организацийĕнче вырăс профсоюзĕсем йышăнса тăма пултаракан вырăн пирки пăтак шикленни çинчен каласа панăччĕ. Пĕтĕмĕшле ĕç конфедерацийĕ ячĕпе эпĕ çапла калама пултаратăп: ку ыйтупа пирĕн нимĕнле шикленӳ те çук. Совет профсоюзĕсем хăйсен пысăк влиянийĕпе епле усă курнине эпир пĕлсе тăратпăр, çавăнпа та вĕсем йышăнас вырăн пирки пирĕн нимĕнле шикленӳ те çук. Франци делегацийĕ Хиллмэн докладне тата докладри выводсене пĕтĕмĕшпех ырлать», тенĕ. Фрашон сăмахне делегатсем хĕрӳллĕн алă çупса ырланă.

Профсоюзсен федерацийĕн никĕсĕсем пирки сĕнӳсен проектне çырма конференци 11 çынтан комисси уйăрса хунă. Совет делегацийĕнчен çав комиссие Тарасов юлташа суйланă.

Конференци Крымри конференцин решенийĕсене саламласа, Сталин юлташ ячĕпе тата Рузвельтпа Черчилль ячĕпе саламлă телеграмма яма йышăннă.

ЛОНДОН, февралĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Конференцин касхи ларăвĕнче профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери организацийĕн никĕсĕ пирки пренисем вĕçленнĕ.

Çавăн хыççăн конференци мандат комиссийĕн пĕтĕмĕшле ... докладне итленĕ. Кун хыççăн вара кун йĕркинчи юлашки ыйтăва—вăрçă хыççăнхи реконструкципе профсоюзсен сыхăри задачисене сӳтсе явма тытăннă.

Ку ыйтупа Британи тред-юнионĕсен конгресĕн делегачĕ Галли доклад туса панă.

ЛОНДОН, февралĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцийĕн февралĕн 15-мĕшĕнче пулса иртнĕ ларăвĕнче вăрçă хыççăнхи реконструкципе профсоюзсен сыхăри задачисем çинчен малалла калаçнă.

Чи малтан совет профсоюзĕсен делегачĕ Марков юлташ сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: рабочисем çынсене лăпкăлăхпа хăрушсăрлăх паракан мир туса хурасшăн. Ĕçсĕрлĕхпе чухăнлăх хăрушлăхĕ, иртнĕ вăрçă хыççăнхи экономика кризисĕ демократиллĕ нумай çĕршывсенчи халăхсен асĕнчен халĕ те кайман-ха, тенĕ. Марков юлташ профсоюзсен юхăмĕ çак виçĕ требованине кăларса тăратмалли çинчен каланă: пĕррремĕшĕнчен, вăрçăра çĕнтернĕ нацин экономикине ура çине тăратасси; иккĕмĕшĕнчен, наци экономикине мирлĕ условисене куçармалли плансене туса хурасси; виççĕмĕшĕнчен, ĕçсыннисене пурне те ĕç тупса парасси. Марков юлташăн сăмахне делегатсем хĕрӳллĕн алă çупса ырланă.

Марков юлташ хыççăн США делегацийĕн представителĕ Кэррен сăмах тухса каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл рабочи класа ӳт тĕсĕ тăрăх, раса тăрăх тата тĕн тăрăх уйăрса яма хăтланни çинчен каланă. «Рабочисен тивĕçлĕхне йышăнмасан тата вĕсен тивĕçлĕхне пĕтĕм тĕнчипех мĕнле расине, ӳт тĕсне е мĕнле тĕн тытса тăнине пăхмасăрах хӳтĕлемесен,—тенĕ Кэррен,—нимĕнле мир те пулма пултараймасть. Пĕр-пĕр çĕрте чуралла ĕç условийĕсем е тан мар условисем пулсан, пĕр рабочи те хăрушсăрлăхра пурăнатăп тесе калама пултараймасть. Гитлерла шухăшсене тĕнĕл çĕршывĕсенчен кăна мар, хамăр çĕршыври çынсен ăс-тăнĕнчен те кăларса пăрахмасассăн, вăрçă хыççăн та нимĕнле прогресс та пулма пултараймасть.

Нигери представителĕ Бэнкол çапла каланă: колониллĕ çĕршывсенчи рабочисене те манса хăвармалла мар, вĕсен интересĕсене спекулянтсемпе монополистсен аллине памалла мар, тенĕ.

Совет делегацийĕн членĕ Сахарова юлташ вăрçă ĕçĕнче çамрăксем мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен каласа панă. Вăрçă хыççăнхи вăхăтра çамрăк рабочисемпе студентсен интересĕсене хӳтĕлес тĕлĕшпе тĕрлĕ сĕнӳсем панă.

Индири ĕç федерацийĕн представителĕ Праманик Индири рабочисем нушара пурăнни çинчен каласа панă. Вăрçă вăхăтĕнче нумай инкек курнă салтаксемпе моряксем ĕлĕкхи пусмăрлăхпа ĕçсĕрлĕх условийĕсене урăх курмалла мар, тенĕ вăл.

Конференци касхи ларăвĕнче союзниксене вăрçă тĕлĕшпе пулăшса тăрасси çинчен калакан резолюцие сӳтсе явса йышăннă.

Конференци йышăннă резолюци çаксене палăртать: историллĕ çак конференци пĕрлешнĕ нацисен хĕçпăшаллă вăйĕсем пур çĕрте те çĕнтересе пынă вăхăтра пулса иртет. Германие таткăланах çĕмĕрсе тăкас тĕлĕшпе тумалли вăрçă ĕçĕсем пирки Премьер-Министр Черчилль, Маршал Сталин тата Президент Рузвельт пĕтĕмĕшпех калаçса татăлнă текен пĕлтерĕве конференци саламлать. Резолюцире малалла Японие хирĕç вăрçакан çĕршывсен задачисем çинчен каланă.

«Çĕнтерӳ кунне çывхартас тесе,—тенĕ резолюцире,—пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцийĕ ирĕке кăларнă çĕршывсенче çынсене мобилизацилесе вĕсене кирлĕ пек хĕçпăшаллантарма пур енчен те пулăшма чĕнет. Вăл çĕршывсем те тăшмана хирĕç пыракан вăрçа анлăн хутшăнма пултарччăр».

Резолюцире малалла çапла каланă: «Рабочисене анлă мобилизацилени вĕсен экономика интересĕсене сыхлассинчен уйăрăлма пултараймасть. Профсоюзсен ĕçукçине тивĕçлипе пурăнма кирлĕ таран ӳстерессишĕн кĕрешмелле. Пĕр пек ĕçшĕн пĕр пек ĕçукçи пулмалла, ăна нацине, расана, арçынне-хĕрарăмне пăхса хумалла мар. Профсоюзсен хваттер условийĕсене лайăхлатассишĕн, социальнăй обеспеченишĕн, апат-çимĕç запасĕсене тивĕçлипе валеçессишĕн, ушкăнлă килĕшӳсене тата рабочисен прависене сыхлас тĕлĕшпе кăларнă правительство приказĕсемпе декречĕсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешсе пымалла.

Ирĕке кăларнă çĕршывсемпе территорисенче эпир унти халăхсене вăрçă ĕçне пулăшма мобилизацилекен политикăна тытса пырассишĕн тăратпăр. Вăл политика тăрăх çаксене тумалла: халех сăмах ирĕкĕ, пичет ирĕкĕ, пухусем тăвас ирĕк, тĕн ирĕкĕ, политика организацийĕсемпе профсоюзсем тăвас ирĕк памалла; халăх килĕштерекен правительствăсем туса хумалла; халăх валли апат-çимĕç тата чĕртавар кирлĕ таран тăратмалла, çапла вара çав районсенчи производствăна тата ĕç вăйĕсене çителĕклĕ таран усă курма май пулмалла.

Хамăр çĕршывсен правительствăсенчен эпир франкистла Испание, Аргентинăпа тата фашистла ытти çĕршывсемпе экономикăпа ытти енчен çыхăнса тăма кирлине кирлĕ марине тепĕр хут пăхса тухма ыйтатпăр. Нейтралитет ячĕпе вĕсем пирĕн тăшмансене пулăшса тăрассĕ. Хамăр правительствăсенчен эпир Швецине Швейцари пек нейтральнăй çĕршывсене гитлерла Германие апат-çимĕçпе чĕртавар парса тăма чармалла ыйтатпăр. Вĕсем—çар преступникĕсене хамăр çĕршывсене ямастпăр тесе сăмах парччăр».

Юлашкинчен резолюцире çапла каланă: пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцийĕ Пĕрлешнĕ нацисен пĕрлĕхне упраса хăварас тата çирĕплетес тĕлĕшпе мĕн тума май пуррине пĕтĕмпех тума пулать. Çак ĕçре Пĕрлешнĕ нацисен рабочийĕсен пĕрлĕхĕ çирĕп шанчăк пулса тăрать.

СОВЕТ ПРОФСОЮЗĔСЕН ДЕЛЕГАЦИЙĔ ЛОНДОНРА ТУНĂ ЙЫШĂНУ

ЛОНДОН, февралĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Февралĕн 15-мĕшĕнче совет профсоюзĕсен делегацийĕ пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцийĕн делегачĕсем валли йышăну туса иртернĕ. Йышăнура 400 хăна ытла пулнă. Хăнасем хушшинче, конференци делегачĕсемсĕр пуçне, Англипе ытти çĕршывсенчи профсоюзсен представителĕсем, çавăн пекех тата пичет представителĕсем те нумай пулнă.

Йышăну питĕ кăмăллă пулса иртнĕ.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕпе Франци Республики союзлă пуласси тата пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен тунă договора çирĕплетни çинчен калакан грамотăсене улăштарса илни

ПАРИЖ, февралĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Парижра Совет Союзĕн Францири Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ А. Е. Богомолов тата Франци Республикин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Жорж Бидо господин 1944 çулхи декабрĕн 14-мĕшĕнче Мускавра Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕпе Франци Республики союзлă пуласси тата пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен тунă договора çирĕплетни çинчен калакан грамотăсене улăштарса илнĕ. Вăл договора Францин Вăхăтлăх Правительстви 1944 çулхи декабрĕн 22-мĕшĕнче, СССР Верховный Совет Президиумĕ 1944 çулхи декабрĕн 25-мĕшĕнче çирĕплетнĕ.

ППС-ăн ГЕНЕРАЛЬНĂЙ СЕКРЕТАРĔ МАТУШЕВСКИЙ КРЫМРИ КОНФЕРЕНЦИ ПОЛЬША ЫЙТĂВĔ ПИРКИ ЙЫШĂННĂ РЕШЕНИСЕМ ÇИНЧЕН

ВАРШАВА, февралĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Союзлă виçĕ держава руководителĕсен — Сталинăн, Рузвельтăн, Черчиллĕн—конференцийĕ пĕтни çинчен пĕлтернине Польша общественноçĕ туллин кăмăлпа йышăннă.

Крымри конференци Польша пирки йышăннă решени çинчен каласа, вăл решени демократиллĕ Польшăн пысăк çĕнтерĕвĕ пулать, тесе пĕлтернĕ Польшăри радио.

Польшăри социалистсен партийĕн (ППС) генеральнăй секретарĕ Матушевский çапла каланă: союзлă виçĕ держава—СССР, Англи тата США, гитлеризмпа кĕрешес ĕçĕн пĕтĕм йывăрлăхне хăйсем çине илнĕскерсем, демократиллĕ Польша республикин хальхи Вăхăтлăх Правительстви ĕçлесе тăнине йышăнассĕ, анчах ăна Польшăри тата ют çĕршывсенчи демократиллĕ элементсене хутшăнтарса аслăлатма сĕнессĕ.

Официальнăй йĕркепе пĕлтернинче «Польшăн Лондонри эмиграцири правительстви» текен сăмах çукки çав «правительство», поляксен реакциллĕ ушкăнĕсенчен тăраканскер, политикăллă вăй вырăнне шутланманнине пĕлтерет.

Демократиллĕ Польшăн территорийĕ «виççĕшĕн конференцийĕ» йышăннă решени тăрăх, çурçĕрпе хĕвеланăç енелле сарăлмалла. Ку вăл—пысăк çĕнтерӳ. Польша халăхĕн ĕмĕчĕ пурнăçа кĕрет.

«Виççĕшĕн конференцийĕ йышăннă решени,—тенĕ Матушевский,—пире, поляксене, хутшăнтармасăрах йышăннă решени пулать. Анчах эпĕ çакна каласа парасшăн: эпир хутшăннă пулсан та, кунтан лайăхрах тăвас çукчĕ, кунтан лайăххине эпир нимĕн те кĕтместпĕр те».

БЕЛЬГИРЕ ХИРĔÇ ТĂРСА КĔРЕШЕКЕН ХАЛĂХ СОВЕТНЕ ТУНĂ

ПАРИЖ, февралĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 1-мĕшĕнче Хирĕç тăрса кĕрешекен халăх советне туса хурасси çинчен калакан декрет çине Бельги регенчĕ алă пуснă. Вăл совет хирĕç тăрса кĕрешекен Бельгири пур организацисен (кашни организацирен пĕрер делегат) представителĕсене пĕрлештермелле. Совет канашлакан орган пулать. Вăл хирĕç тăрса кĕрешекен движенипе правительство хушшинче пĕрмаях сыхăну тытса тăмалла.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, февралĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедицилле вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Германире союзниксен çарĕсем Клеве хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре Варгенен хулине йышăннă та Рейн еннелле малалла куçнă. Рейхсвальд вăрманĕнчен кăнтăртарахра союзниксем Нирс шывĕ хĕрринчи хăйсен плацдармне аслалатнă, Рейн облаçĕнчи Кессельпе Есммерсум хулисене тытса илнĕ.

Эхтернахпа Ремих (Люксембург) районĕсенче те союзниксен çарĕсем малалла кайнă.

Çурçĕр Эльзасра, Хагенау хулинчен хĕвеланăçнерехре, тăшман Молер шывĕ урлă каçма хăтланнине сирсе пăрахнă. Страсбургпа Саверн районĕсенче союзниксен çарĕсем февралĕн 13-мĕшĕнче 1.499 çынна тыткăна илнĕ.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн çар объекчĕсене пыра-пыра тапăннă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ ГЕРМАНИЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, февралĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 15-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен 1.300 бомбардировщикĕ ытла Дуисбург, Майнц, Нюрнберг тата Дессау хулисене тапăннă. Çĕрлехи истребительсем бомбардировщиксене хӳтĕлесе пынă, вĕсем хăйсем те тăшман аэродромĕсене атакăланă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер касхине американецсен 1.100 йывăр бомбардировщикĕ ытла, 450 истребитель ытла хӳтĕлесе пынипе, Дрезден хулипе Коттбус хулине тата тепĕр хут тапăннă. Коттбус хули Дрезден хулипе Одер çинчи Франкфурт хули хушшинчи чугун çулăн паха узелĕ пулса тăрать. Çавăн пекех тата Магдебург хули патĕнчи синтетически горючи заводĕ çине те бомбăсем пăрахнă.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ ЯПОНИЕ ЙЫШЛĂН ВĔÇСЕ КАЙСА ТАПĂННИ

ВАШИНГТОН, февралĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). США-н Лăпкă океанри флочĕн штабĕ çапла пĕлтернĕ: Лăпкă океанри флотăн вăйлă эскадри, авиаци вăйĕсемпе усă курса, хальхи вăхăтра Токио хулипе унăн таврашĕнчи авиаци завочĕсене тата ытти объектсене пыра-пыра тапăнать. Çакăнпа пĕрлех Лăпкă океанри флотăн карапĕсем Иводзима утравĕ çине персе тăрассĕ, авиаци—çывăхри Бонин утравĕсем çине перет.

ЛОНДОН, февралĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, американецсен хăватлă эскадрине кĕрекен авианосецсем çинчен Токио районне 1.500 ытла самолет вĕçсе кайнă. Çакăнпа пĕрлех карапсемпе авиаци Хонсю утравĕнчен (Японин тĕп утравĕ) кăнтăртарахри утравсем çине персе тăнă е бомбăсем пăрахнă. Çав тапăнусен тĕллевĕ—Япони утравĕсем çинчи оборона бастионĕсем хушшине десант антарма хатĕрленесси пулать пуль, тесĕ.

ТОКИО, февралĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Япони императорĕн ставки пĕлтернĕ тăрăх, американецсен оперативнăй эскадри Япони шывне çитнĕ, авианосецсем çинчен вĕçсе хăпарнă самолетсем Канто районне тата Сидзуока префектурине (Хонсю утравĕ çинче) атакăланă. 30 çар карапĕнчен тăракан тепĕр эскадра (вĕсен шутĕнче линкорсем тата авианосецсем пур) Иводзима утравĕ çине персе тăнă.

Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Япони самолечĕсем Америка авиацине хирĕç вăйлăн çапăçнă.

УМАНСКИЙ ЮЛТАШ ÇӲЧĔН КĔЛНЕ АСАТНИ

САН-ФРАНЦИСКО, февралĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Пĕрлешнĕ нацисен Сан-Францискăри консульствисен пур представителĕсем те, США-н хĕçпăшаллă вăйĕсен аслă офицерĕсем, США-па Мексикăн ятарласа уйăрнă представителĕсем тата Сан-Франциско хулин мэрĕ Лепгем февралĕн 13-мĕшĕнче Совет Союзĕн Мексикăри посолĕ пулнă Уманский юлташ çӳчĕн кĕлне, унăн арăмĕн тата совет посольствин Мексикăри сотрудникĕсен çӳчĕсен кĕлне, авиаци катастрофи пулнă пирки вилнĕскерсене, Сан-Францискоран ăсатса янă çĕрте пулнă. Пухăннă çынсем Совет Союзĕн Сан-Францискăри генеральнăй консульствинче 5 минут хушши пĕр чĕнмесĕр тăнă. Вăл посольствăра вилнисен кĕлĕсене хунă кĕмĕл урнăсем (савăтсем) виçĕ кун хушши ларнă. Çав виçĕ кун хушшинче генеральнăй консульство çуртне вилнĕ посолпа посольство сотрудникĕсене хисепленĕ юлашки хут палăртас шутпа, тĕрлĕ организацисен 400 ытла представителĕ пырса кайнă.

Кунта пулнă çынсем урнăсене аэродрома çитиччĕнех ăсатса янă. Аэродромра Америка çарĕн 4 моторлă бомбардировщикĕ хатĕр тăнă. Урнăсене самолет ăшне илсе кĕрсен, Америка салтакĕсен роти виçĕ хут пĕр харăс пенĕ. Самолет сывлăша хăпарнă чухне тепĕр хут салют панă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Шупашкарти электромеханика техникумĕ 1-мĕшпе 3-мĕш курссене вĕренме илет. 1-мĕш курса вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисене, 3-мĕш курса—вăтам шкулăн 10-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисене илессĕ.

Техникум çак специальноçсене вĕрентет: 1) электричество аппарачĕсем тăвасси, 2) метала касса ĕçлесси.

Вĕренекенсене общежитие вырнаçтарассĕ, стипенди парассĕ, столовăйра апатлантарассĕ.

Заявленисене мартăн 1-мĕшĕччен йышăнассĕ.

Адрес: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 82. Электромеханический техникум.

Чăвашпотребсоюзĕн вĕренӳ комбиначĕ çумĕнче ялпосен бухгалтерĕсене вĕрентсе кăлармалли виçĕ уйăхлăх курс уçăлать. Ялпосенче 6 уйăхран кая мар ĕçленĕ тата шкулта çичĕ çултан кая мар вĕреннĕ счетоводсемпе вĕренекенсене илессĕ.

Вĕренекенсене уйăхне 200 тенкĕ стипенди парассĕ тата столовăйра икĕ хут апат çитерессĕ.

Вĕренме кĕрес текенсен хăйсемпе пĕрле паспорт, хăйсене апат-çимĕç парса тăма пăрахнине кăтартакан справка тата райпотребсоюз вĕсене вĕренме янине кăтартакан хут илсе пымалла.

Адрес: гор. Чебоксары, Театральная, 1/5, Учкомбинат Чувашпотребсоюза.

Чăвашпромстрахкассăна çар çыннисен çемьисене пулăшакан инспектор, врач организатор тата ĕç сыхлавĕн инспекторĕ пулма вĕренме ученикsem кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Калинина, 51, Чувашпромстрахкасса.

Ял Совет исполкомĕсен ĕçĕнчи культурăлăх пирки

Чăваш АССР Конституцийĕн 51-мĕш статьи тăрăх, ял Советсене хăйсен территорийĕнче культурăпа политика тата хуçалăх строительствине ертсе пыма, вырăнти бюджета тума, хăйсене пăхăнса тăракан органсен ĕçĕсене ертсе пыма, государство йĕркелĕхне сыхласа тăма, çĕршывăн оборона хăватне вăйлатма, законсене тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пыма тата граждансен прависене сыхлама право панă.

Ял Совечĕсем, çав правăсемпе усă курса, куллен пысăк ĕçсем туса пыма тивĕçлĕ. Вăл ĕçсене ăнăçлăн пурнăçласси ял Совет исполкомĕн, унăн председателĕн ĕçĕнчи культурăран нумай килет. Ĕçре культурăлăх тăвас тени вăл, чи малтанах, мĕнпур ĕçсене план тăрăх туса пырассине, контроль ĕçне лайăх йĕркелессине, пур ĕçре те çирĕп йĕрке тата дисциплина тăвассине пĕлтерет. Паллах, кăна ял Совет председателĕ хăй пĕччен, актива, депутатсене явăçтармасăр, тума пултараймасть.

Пирĕн республикăра хăйсен ĕçне культурăллă йĕркелесе пыракан ял Совечĕсем сахал мар. Елчĕк районĕнчи Сăрьел ял Советне илер. Унта ял Совечĕн активĕ колхозсене пур енчен те пулăшса тăрать. Ял Совечĕ çумĕнче суту-илӳ, шкул тата бюджет комиссийĕсем ĕçлессĕ. Депутатсем суйлавçăсемпе таччăн çыхăнса тăрассĕ. Вĕсемпе калаçусем иртерсе, ял Совечĕн, партипе правительствăн решенийĕсене ăнлантарса парассĕ, хăйсен ĕçĕсем çинчен отчет туса парассĕ. Çавăнпа та Сăрьел ял Совечĕ ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра пурнăçлать. Государствăна тырă памалли плана срокчен тултарса, кăçалхи çулшăн та 1.200 пăт тырă панă.

Ял Совет председателĕ тасалăха, тирпейлĕхе юратма тивĕçлĕ. Çакă вăл председателĕн авторитетне çĕклеме пулăшать. Ĕç вырăнĕ таса та тирпейлĕ пулмалла. Совет влаçĕн ялти органĕн çурчĕ вăл ялти чи культурăллă çурт пулмалла. Унта шторсем, сĕтел-пукансем, портретсем, телефонсем, тĕрлĕ графиксем, диаграммăсем йĕркеллĕ, хăйсен вырăнĕнче пулни кирлĕ. Ял Советне пыракансем совет влаçĕн ялти органне пынине чĕннипех туйса илме пултарччăр. Ял Советне пыракансене йышăнас тата вĕсене ăнлантарса парас ĕçе ырă кăмăлпа, пĕр мăнкăмăлланмасăр туса пымалла. Чăн-чăн руководитель çавăн пек кăна тума тивĕçлĕ. Çавăнпа та ял Совет председателĕ халăха культурăлăхăн тĕслĕхне кăтартни кирлĕ. «Çынăн пичĕ те, тумтирĕ те, чунĕ те, шухăшĕ те питĕ лайăх пулмалла» (Чехов). Ял Совет председателĕн культурăлăхĕ унăн авторитетне ӳстермелли паллă условии пулса тăрать. Председатель культурăллă ĕçленĕ ял Совечĕсенче ĕç те тивĕçлипе пулса пырать.

Улатăр районĕнчи Алтышево ял Совет председателĕ Годунов ниçта та хăйĕн кабинетĕнче табак туртма чарман. Анчах та ял Советне пынă çынсем, унта лайăх та тирпейлĕ пулнине кура, табак туртма хăяймассĕ. Годунов юлташ хăйне ăшă кăмăллă тытать. Ĕçсыннисем унран яланах кирлĕ ответ илсе тухассĕ. Сĕнтĕр районĕнчи Калайкасси ял Совет председателĕ Аксяндарова, Йĕпреç районĕнчи Андреевка ял Совет председателĕ Антонова юлташсем те çавăн пекех лайăх ĕçлессĕ.

Анчах та республикăри чылай ял Совечĕсем хăйсен ĕçне культурăллă йĕркелеме тăрăшмассĕ-ха. Чурачăк районĕнчи Пĕрремĕш Вăрманкас ял Совечĕ хăйĕн ĕçне халĕ те кирлĕ пек организацилемен. 1944 çулта ял Совечĕн ларăвĕсенче колхоз, шкул ĕçĕсем çинчен пĕр хутчен те сӳтсе явман. Ларусене яланах сӳрĕк иртернĕ. Депутатсен учет карточкисене сыхлас ĕçе çав тери япăхтарса янă. Ял Совет председателĕ Ильин юлташ ял Советне кĕрсе тухнисĕр пуçне нимĕн те туман. Колхозсене ĕçре пулăшса пыман. Çавăнпа та ял Совечĕн канцелярийĕнче 10—14 çулхи ачасем кирлĕ мар сăмахсемпе çуйăхнисĕр пуçне нимĕн те курма çук. Çавнашкалах Икĕмĕш Вăрманкас ял Советĕнче те тирпейлĕх çук.

Вăрнар районĕнчи Кĕçĕн Кипек ял Совечĕн канцелярийĕнче хăшпĕр вăхăтсенче табак туртса тултарнипе сывлама та хĕн. Сĕтелсем çинче çĕçĕпе касса çын ячĕсене тата ытти сăмахсем çырса хунă. Шăхасан районĕнчи Енĕш ял Совет председателĕн кабинетне пĕрле табак туртма пухăнассĕ. Çавăнпа та урайĕнче хаçат татăкĕсем, чĕлĕм тĕпĕсем туллиех выртассĕ. Канцеляринчи плакатсем сăрăхса ларнă. Ял Совет исполкомĕн пĕчĕк библиотека пур. Анчах кĕнекесене шкафа пĕр тирпейсĕр хунă. Çавăнпа та ял Совет председателĕ Максимов юлташ хăш кĕнеки ăçта выртнине те пĕлмест. Ял Советĕнче ĕçлекенсем ял Советне ĕçпе пыракансене питĕ мăн кăмăллăн йышăнассĕ. Хăш чух вĕсене тивĕçсĕр сăмахсемпе ятлаçса кăларса ярассĕ.

Çавăн пек тирпейсĕрлĕхе пĕтерме вăхăт ĕнтĕ. Пирĕн ял Совечĕсен авторитетне ӳстерме пур условисем те пур. Ял Совечĕсен хăйсен ĕçне культурăллă организацилесе, актива ĕçе анлăн явăçтарса, колхозлă ялăн вăйне тăшмана пĕтерсе тăкассишĕн кĕрешме мобилизацилемелле.

П. СКВОРЦОВ.

Ял Совет председателĕсен Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи курсĕн директорĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторан — 0—67, заместитель секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин 0—22.

НТ 00277 Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 10.000